## Сăмах – специалиста

# Выльăхсем çарана тухаççĕ

Тавралăх юртан тасалнă май ял çынни çĕр ĕçне пикенчĕ. Акă хирсем майĕпен трактор-машина шавĕпе тулчĕç. Тавралăх хĕрӳ ĕç шавĕнче пулнине пăхмасăрах сивĕсем иртсе кайсах пĕтменнипе улăх-çаран ешĕл кавирпе витĕнме васкамасть-ха. Апла пулин те çĕр-шыв типнине кура выльăх-чĕрлĕхе улăх-çарана кăлармалли вăхăт çывăхрах та çывăхрах. Çу кунĕсем çывхарнă май выльăхсене улăх-çаранта çӳретмесĕр вĕсен продуктивлăхне ӳстересси, пăрусем илесси тата сывлăхĕсене çирĕплетесси иккĕленӳллĕ. Çапла вара Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин палăртнă наци проекчĕ те çак тапхăрта выльăхсене ĕрчетесси тата вĕсенчен продукци илессине ӳстерессипирки çиччĕ виçтерсе шухăшлаттарать.

Ĕнесене улăх-çарана кăларасса çынсем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Вĕсем çак вăхăт хăйсен килти хушма хуçалăх экономикишĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине, выльăхсен сывлăхĕшĕн усăллине, пĕрлешӳллĕ хуçа-



– Ферма тăвакансем ĕлĕкрех малалла пăхсах ĕçлени паян пире тулли хавхаланупа ĕçлеме май парать. Эпир çапла тăвасшăн та. Пире çак çулпа кайма выльăхĕ ытларах кирлĕ, апачĕ кунран куна çитсе пытăр. Выльăхсенчен продукци илессипе паянхи пек уйăхсерен 3-4 пин тенкĕ ĕç укçи тӳлесен эпир тухăçлăрах ĕçлеме те хатĕр, – çирĕплетрĕ юлташĕсен сăмахĕсене Елена Георгиевна Михайлова дояркa.

лăхсен тĕрекне вăйлатма меллине ăнланаççĕ. Кунсăр пуçне выльăхсем çарана тухсан вите-сарайсене кантарма, вĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерме пулать. Анчах ял çыннисен çак тапхăра хатĕрленнĕ май картара утă-улăм мĕн чухлĕ юлнине шута илни те ытлашши мар. Çакă выльăхсене симĕс курăк çине кăларса апатлантарăва улăштарнă вăхăтра уйрăмах кирлĕ, мĕншĕн тесен нумай хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсем çава начарлансарах тухаççĕ. Çак вăхăтра кашни выльăхпах диагностика тĕпчевĕ, профилактика прививкисем, тĕрлĕ хуртсене эмел парса пĕтерес ĕçсем тата ерекен чирсемпе кĕрешмелли плансемпе килĕшӳллĕн ветеринарипе санитари мероприятийĕсем ирттермелле.

Ĕнесене улăх-çарана кăлармалли вăхăт çитнĕ май кĕтӳçсем хатĕрлесси пирки те манмалла мар. Çак тапхăр ăнăçлă иртĕр тесен кĕтӳçсен выльăхсене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлмелле. Асра тытмалла, ĕнесене улăх-çарана кăларас умĕн агрономсемпе зоотехниксен çав вырăнсене пăхса тухса актпа хак памалла, пĕрле пулса çарансене темиçе ана çине пайламалла. Унпа черетпе усă курсан сĕт памалли ĕнесем валли тăтăшах çемçе

курăк пулать. Улăх-çарана унта тĕрлĕ ăпăр-тапăр тулса ларасран тăтăшах пăхса тăмалла, вăхăтра тасатмалла. Унта наркăмăшлă япаласемпе минераллă удобрени миххисем пуласран



"Дружба" агрофирма" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Ойкасри сĕт ферминче ĕçлекенсем те выльăхсене улăх-çаранта тытас тапхăр пирки кĕтнĕ вăхăт тесех шутлаççĕ. Пĕрремĕш кун мар дояркăра ĕçлекен (сулахайран сылтăмалла) Марина Чернова, Валентина Архипова, Елена Прокопьева фермăна куллен чун туртнипе утаççĕ. Авă, Валентина Калистратовна 15 çул хушшинче çак фермăра пăрусем те чылай пăхнă, ĕне сăвассипе те кайри ретре мар. "Фермăра апат пулсан тата сарайсенче выльăх çителĕклĕ тăрсан, продукци илесси пирĕн ĕç", – теççĕ вĕсем хăйсем çу кунĕсем çитессе питĕ кĕтнине пытармасăр.

питĕ сыхланмалла. Выльăхсем улăха тухмалли çулсене, вĕсем çинчи кĕперсене кая юлмасăр юсамалла, улăхсенчи шурлăхлă вырăнсене паллă тумалла, ĕнесене шăвармалли вырăнсене тирпейлемелле тата унти шыва ĕнесем тухиччен лабораторире тĕрĕслеттермелле, выльăхсен кăнтăрлахи кану вырăнĕсемпе çуллахи лагерĕсене йĕркелемелле.

Улăх-çарана тухас умĕн выльăхсем тĕлĕшпе ветеринарсемпе зоотехниксен тĕрĕслевне ирттермелле, вăйлăрах тăрантармалли выльăхсене уйрăм ушкăнсене пĕрлештермелле. Çулленхи практика çакна çирĕплетсе парать: ĕнесене хĕллехи рационтан (протеинпа чухăн та клетчаткăпа пуян) çуллахи сĕтеклĕ апат çине куçарнă тапхăрта вĕсен вар-хырăмĕ час-часах пăсăлать. Çавна пула сăвăм, сĕтри çу хисепĕ чакать. Çапла ан пултăр тесен ĕнесене ир-каç çителĕклĕ утă-



Сăн ӳкерчĕкре эсир Валентина Васильева, Эмма Ярыкова, Римма Волкова тата Алексей Колесников (сулахайран сылтăмалла) выльăх пăхакансене куратăр. "Ыран валли апат пĕтет", – теççĕ вĕсем улăх-çаран еннелле вăл ешерме пуçласса кĕтсе тинкернĕ май.

улăм памалла, макро-, микроэлементсемпе, тăварпа тивĕçтерсех тăмалла.

Ĕнесене улăх-çарана хăнăхтарасси – васкамасăр пурнăçламалли ĕç. Малтанхи икĕ кунĕнче ĕнесене улăхра 2-3 сехетрен ытла çӳретмелле мар. Тепĕр эрнерен çак вăхăта 10-12 сехете çитерсен те юрамалла. Çак тапхăрта пăру-тынашкасем, пăруламалли ĕнесем, хĕл каçа ытларах начарланнă тата чирлесе ирттернĕ

выльăхсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалла. Çăва тухнă май выльăхсене симĕс апата майĕпен хăнăхтарса пыни продуктивлăха тивĕçлĕ шайра упраса хăварма пулăшать.

Сыснасен сывлăхĕпе çăвăрлаттараслăхне сыхласа хăварас тесен вĕсене те çут çанталăка çывăх тытмалла. Çакă вĕсене витере тытнинчен уйрăлсарах тăрать. Çава тухрăмăр тесе сыснасене инçе çула хăвалама кирлĕ мар, вĕсем валли фермăсем çывăхĕнчи лаптăксем те каяççĕ.

Маларах каланине шута илсен, ĕнесене улăх-çарана кăларнă май кĕтӳçсем хатĕрлесси малти вырăна тухса тăрать. Куçару тапхăрĕнче кĕтӳçсен ĕнесене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлмелле. Çакна валли вĕсене медицина аптечкипе, троакарпа, ытти хатĕрсемпе тивĕçтермелле тата вĕсемпе усă курма вĕрентмелле. Хăй ĕçне лайăх пĕлекен кĕтӳç – зооветспециалистсемшĕн пысăк тĕкĕ.

Выльăхсене улăх-çаранта çӳретес тапхăр вăл – йӳнĕрех хăй хаклăхпа ытларах продукци илмелли, кунпа пĕрлех вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлемелли вăхăт. Çакна шута илсе выльăхсене кĕтĕве е çуллахи лагерьсене кăларсан, пĕрремĕш кунранах вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлеме пуçламалла. Ăшă çу кунĕсем хăвăрт иртĕç. Кĕр еннелле вара ĕçсем хушăнсах пырĕç.

**В. ИЛЬИН,**
**районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири ветврач-терапевт.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Техника тата ĕç хăрушсăрлăхĕ

# Техосмотр тăмасăр ĕçе тухас çук

***Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çурхи ака-суха ĕçĕсем вăй илчĕç ĕнтĕ. Çу кунĕсем çитнĕ май техникăна явăçтармалли ял хуçалăх ĕçĕсен калăпăшĕ ӳссе çеç пырĕ. Анчах хатĕр-и-ха эпир вĕсене ĕç хăрушсăрлăхне пăхăнса пурнăçлама, хамăр тунă ĕçпе тулли кĕрекере пĕтĕм халăхпа пĕрле савăнма? Çак ыйту çине хурав шыраса сыхăнтăмăр та эпир ЧР Патшалăх техника надзорĕн Муркаш районĕнчи патшалăх аслă инспекторĕпе С.А. НИКОЛАЕВПА.***

– Пытарăнчăклă та вăлтса калаçмăпăр, мĕншĕн тесен эсир пуçарнă ыйту районта питĕ çивĕч тăрать. Эпир-çке ĕçлессишĕн пуçăнмастпăр, пурăнассишĕн ĕçлетпĕр. Çак çултан пăрăннă кашни утăма этемлĕхĕн юнпа çырма тивет, сахал мар çырнă та. Кун пирки тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ туман тĕслĕхсем самай шухăшлаттараççĕ. Акă çур акине хутшăнмалли техникăна техника тĕрĕслевне тăратма пуçланăранпа вăхăт уйăх çурă, кун çинчен хаçат урлă пĕлтернĕренпе икĕ уйăх иртрĕ. Мĕн куратпăр-ха паян? Ку ыйту çине паракан хурав паян кашни механизатора, пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçипе инженери службине, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене шухăшлаттармалла. Ӳкерчĕкĕ вара çакнашкал: çу уйăхĕн 5-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе предприятисенчи 423 тракторпа 257 прицепран 172 тракторпа 62 прицеп çеç техосмотр витĕр тухрĕç. Ыттисем вара... 100 проценчĕпех тракторсене тата 75 процент прицепсене техосмотр тăратнă хуçалăх (районти чи лайăх кăтарту) – "Герой" ял хуçалăх производство кооперативĕ. Лайăхрах лару-тăрупа "Восток", "Оринино", Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсем уй-хире тухрĕç. Çав вăхăтрах "Динамо", К. Иванов яч.хис., "Колос", "Лидер", "Нива" агрофирма, "Хлебороб", "Чемеево" хуçалăхсенче пĕр тракторпа прицеп та ĕçе тухма хатĕр мар. Анчах вĕсем ĕçлеççĕ, ĕç хăрушлăхне ӳстереççĕ...

Паян черетре килти хушма хуçалăхри трактор-прицепсене техосмотр тăратмалли ĕç. Анчах кунта та татса паман ыйтусем сахал мар. Çынсен харпăрлăхĕнчи трактор-прицепсене техосмотр тăратмалли вырăн – хуçисем пурăнакан çĕрти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен мехпаркĕсем. Ку ĕç вырăнти ял тăрăхĕсем урлă çак графикпа пулса пырĕ:

| | |
|---|---|
| Уйкас Янасал | 15.05.07 |
| Мăн Сĕнтĕр | 28.05.07 |
| Ильинка | 28.05.07 |
| Катькас | 29.05.07 |
| Муркаш | 21.05.07 |
| Москакасси | 23.05.07 |
| Оринин | 22.05.07 |
| Çатракасси | 14.05.07 |
| Турай | 17.05.07 |
| Хорнуй | 21.05.07 |
| Чуманкасси | 16.05.07 |
| Шетмĕпуç | 14.05.07 |
| Юнкă | 25.05.07 |
| Йӳçкасси | 15.05.07 |
| Ярапайкасси | 24.05.07 |
| Ярославка | 18.05.07 |

Уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи трактор-прицепсене техосмотр тăратас ĕçре вĕсен хуçисемпе пĕрле ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те активлăх кăтартасса шанас килет. Малтанах çакă вырăнсенчи ял тăрăхĕсенчи йĕркелĕхпе сыхăннă. Иккĕмĕшĕ – техникăна регистрациленĕшĕн тата техосмотр тăратнăшăн каякан пошлина вырăнти бюджета кайни. Кунсăр пуçне техникăна учета тăратнă çынсем çуллен налук тӳленине шутламалла. Куратпăр ĕнтĕ, уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи трактор-прицепсене техосмотр тăратасси пĕрлехи ĕçе çаврăнать. Çапла вара çак тапхăрта ялсенче регистрациленмен тракторсем тăрă шыв çине тухасса, техосмотр тăмасăрах ĕçлекен тракторсем тӳрĕ çул çине таврăнасса шанас килет. Юсавлă трактор хуçишĕн те, унпа усă куракансемшĕн те, ял çыннисемшĕн те хăрушлăха сирсе яни пирки никамăн та иккĕленӳ çук. Палăртнă вăхăтра техосмотр тăман трактор хуçисен вăхăт иртсен тĕрĕслев аллине лексен саккунăн çирĕп статйисемпе калаçма тивĕ: чавса çывăх та çыртма çук.

Техосмотр тăма трактор хуçисен çак ыйтусене пурнăçламалла: трактор-прицеп юсавлă та тирпейлĕ пулмалла, çулленех ял хуçалăх техники çинче пушарсем чылай пулнине шута илсе вут-çулăмпа кĕрешме огнетушитель, инкек тӳснĕ чух валли медицина аптечки тытмалла тата авариллĕ чарăнăвăн палли, регистрацилени çинчен свидетельство, техпаспорт, медицина справки, çав категориллĕ тракторпа ĕçлеме ирĕк паракан удостоверени, страховани полисĕпе налук тата техосмотр тăратма укçа тӳленин квитанцийĕсем.

## Çут çанталăк кĕтесĕ

# Йывăç кунĕ активлă иртрĕ

ЧР Президенчĕ 2005 çулта палăртнă Йывăç кунĕ çак çуркунне те районăмăра йывăç лартса илемлетмелли сăлтав пулчĕ. Йывăç лартнипе пĕрлех районти пур шкулсемпе ача сачĕсенче те хăйсен территорине тĕрлĕ çӳп-çапран тирпейлес ĕç анлă пычĕ. Унти йывăççемпе тĕмсене санитари тĕлĕшĕнчен тасатассипе вырăнсенче хăрнă туратсене касса иртрĕç, шкул территорийĕсене чечексем лартассипе нумай ĕçлерĕç.

Çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче Муркаш плотини çумĕнче Муркаш, Турай, Москакасси,Чуманкасси, Тойкилтĕ, Оринин шкулĕсенче вĕренекенсем (сăн ӳкерчĕксенче) çĕнĕ вăрман никĕслесе хăварчĕç. Çак ырă ĕçĕн пуçарусисем республикăри ачасемпе çамрăксен "Эткер" туризмпа экскурси çурчĕ, çамрăксен экологи дружини пулчĕç. Çак кун шкул ачисем пурĕ 900 хыр, 400 чăрăш лартса хăварчĕç. Хăйсем пурнăçланă ĕç плотина шывне таса тытма пулăшасса, пурăна-киле кунти тавралăха кану илемне кӳрессе, çывăхри çырмасен аталанăвне чарасса ачасем шанаççĕ.

Çамрăксен экологи дружинин представителĕсем – Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем – пухăннисене йывăç лартмалли тата ăна пăхса тăмалли технологипе паллаштарчĕç.

– Йывăç лартасси ырă ĕç, анчах ăна пăхса ӳстерессин ответлăхĕ татах пысăкрах. Çавăнпа çамрăксен экологи дружини çитĕннисем ачасем анчахрах лартнă вăрман тавра карта тытасси пирки иккĕленменнине пĕлтерчĕç. Эпир те çапла пуласса, хамăр ĕç сая каймасса шанатпăр.

**Т. ЕГОРОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата сывлăха сыхлас ĕç пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ.**





# Çурхи илем

Юлашки кунсенче иртен пуçласа каçченех çумăр çуса тăчĕ, юртан тасалнă хыççăн тусанпа витĕнме ĕлкĕрнĕ кашни ӳсен-тăрана çуса тасатрĕ. Çумăр иртнĕ хыççăн пĕр кун çĕкленӳллĕ кăмăлпа çырма хĕрне çитрĕм. Акă ăçта вăл чăн-чăн тĕлĕнтермĕш! Çырман сылтăм енĕ сип-симĕс курăкпа витĕннĕ, сулахай енче вара юр та кайса пĕтеймен-ха. Юр шывĕпе çăвăнса ăшă çумăр шывĕпе вăй илнĕ шапа хупаххи чечеке ларнă та. Унта пыл хурчĕсем çитнĕ.

Чулкаç шывĕ урлă сип-симĕс ыраш пусси аякранах курăнать. Вăхăтра акса хăварнăскер, лайăх хĕл каçнă вăл.

Хыр вăрманне кĕтĕм. Кунта та пуçа минретекен таса сывлăш. Мĕн тĕрлĕ кайăк сасси çук пулĕ кунта! Чакак сасă памасăр мĕнле пулĕ-ха çурхи вăрманта. Кашни хăнана хăйĕн усă сассипе кĕтсе илет вăл. Акă кунтах унăн йăви. Питĕ меллĕ ăсталанă ăна вăл... Юнашарах шăпчăк юрлать. Çак концертсăр çурхи вăрман илемĕ те çук.

Чулкаç юхан-шывĕ хĕрне çитрĕм. Чылай вырăнта пулăççене курма тиврĕ. Акă Уйкаш Апашри Николай Павлов, леререх Геннадий Федоров. Вăтам виçеллĕ пулăсем çуршар витрене яхăнччĕ ĕнтĕ.

Çу уйăхĕ вăй илнĕ вăхăт. Çак вăхăтра çут çанталăкăн кашни кĕтесĕ илемлĕ, кашниех хăйĕн патне йыхравлать: çит, кур, кан. Анчах ан ват çут çанталăка. Сыхла, упра, аталантар ăна!

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

Кĕртекасси ялĕ.